25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
23
ЭРНЕКУН
248 (6183) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Авăна кунӗн-ҫӗрӗн ҫапас пулать

ССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «1942 ҫулта тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуҫалăх продукчӗсене хатӗрлесси ҫинчен» йышăннă постановленире колхозсемпе МТС-сене ҫапла хушса хăварнă: «...кашни молотилкăна талăкра 20 сехетрен кая мар ӗҫлеттермелле, тырра комбайнсемпе вырас ӗҫ вӗҫленсенех вӗсемпе авăн ҫапнă ҫӗрте усă курмалла», тенӗ.

Партипе правительствăн ҫак постановленине тӗп вырăна хурса, Чăваш республикинчи колхозсем авăн ҫапас ӗҫе вăхăтра тытăнчӗҫ, нумай колхозсем ку ӗҫе организованно туса пыраҫҫӗ. Комсомольски районри малта пыракан колхозсем авăна кунӗн-ҫӗрӗн ҫапма тытăннă. Витнӗ итемсемпе усă курса тата молотилкăсене пурне те ӗҫлеттерсе, «Мотор» колхоз членӗсем 319 гектар ҫинчи тырпулсене пӗтӗмӗшпех ҫапса пухнă. Авăн ҫапас ӗҫе кунта ҫӗрле те, кăнтăрла та аңлăн туса пынă. Ҫавăн пекех «Интернационал», «Ударник» колхозсем те авăна сменăсем тăрăх кунӗн-ҫӗрӗн ҫапаҫҫӗ.

Партипе правительствăн постановленине лайăх пурнăҫласа пырса, октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне Шупашкар районӗнчи 18 колхоз, Элӗк районӗнчи 18 колхоз, Сӗнтӗр районӗнчи 10 колхоз авăн ҫапса пӗтерчӗҫ. Республикипе илсен, ҫӗр колхоз ытла авăна ҫапса пуҫтарнă.

Авăн ҫапас плана Кувакино районӗ, 77,3 процент, Шăхасан районӗ 75,5 процент, Канаш районӗ 72,4 процент, Элӗк районӗ 71 процент, Первомайски район 70 процент пурнăҫланă. Октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне илнӗ даннăйсем тăрăх, кăҫал пирӗн колхозсем иртнӗ ҫул ҫак вăхăт тӗлне ҫапнинчен 90 пин гектара яхăн ытларах ҫапнă. Анчах ҫакă вăл пире лăпланса лармa пӗррe те ирӗк памасть. Республикăн чылай районӗсем авăн ҫапас ӗҫе вăраха ярса пыраҫҫӗ. Ку ӗҫе пур ҫӗрте те ăнăҫлăн вӗҫлес тесен колхозсен татах пысăк вăй пухса ӗҫлемелле. Советски, Елчӗк, Вăрмар, Чкаловски, Шăмăршă районӗсенчи колхозсенче авăн ҫапас ӗҫе уйрăмах вăйлатмалла. Ку районсем авăн ҫапма вăхăтра тытăннă пулсан та, республикăри ытти районсенчен юлса пыраҫҫӗ.

Авăн ҫапас ӗҫ халӗ, кӗрхи ҫӗртмепе пӗрлех, колхозсенче тӗп вырăн йышăнмалла. «Тырпулпа уйра мар, кӗлетсемпе амбарсенче мухтан», тет халăх сăмахӗ. Авăн ҫапас ӗҫе вăраха хăварсан нумай тăкаланчăксем пуласси паллах тата вăл государство умӗнчи обязательствăсене вăхăтра татса парассине те, вăрлăхлăх тырăсене ырă ҫанталăкра тирпейлесе хурассине те чарса тăрать. Ҫакна колхоз руководителӗсен ҫирӗп ăнланмалла.

Советски районри Тимойри «Майăн 1-мӗшӗ» тата Уйкас Асламасри «Искра» колхозсем авăн ҫапас ӗҫе йӗпе ҫанталăкра та ăнăҫлăн туса пыраҫҫӗ. «Майăн 1-мӗшӗ» колхозра, ултă лаша вăййепе ӗҫлекен молотилкăна витнӗ итем ҫинче вырнаҫтарса лартса, колхозниксем авăна талăкӗ-талăкӗпех ҫапаҫҫӗ. Ҫапла ӗҫленипе колхоз авăн ҫапас ӗҫе хăвăрт вӗҫлерӗ. Ҫакăн пек ӗҫлеме ытти колхозсенче те пур условисем те ҫителӗклӗ пулсан та, Советски район авăн ҫапас ӗҫре кая юлса пырать. Районри колхозсенче витнӗ итемсем 156 шутланаҫҫӗ, анчах вӗсенчен 11-че ҫеҫ авăн ҫапаҫҫӗ, 131 молотилкăран паянхи куна 21-шӗ ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Советски районри колхозсенче ӗҫлеме тивӗҫлӗ Етӗрне, Элӗк, Сӗнтӗр МТС-ӗсен молотилкисем ҫак кунсенче пачах та ӗҫлемесӗр лараҫҫӗ. Апла пулин те, ку МТС-сен руководителӗсем вӗсен ӗҫӗсемпе пачах та интересленмен.

Колхоз председателӗсен, МТС директорӗсемпе политотдел начальникӗсен тата ҫӗрӗҫ органӗсенче ӗҫлекен работниксен паянхи ответлă задачи—авăн ҫапас ӗҫе кунӗн-ҫӗрӗн туса пырасси, ку ӗҫ вăрахăн пынине халех пӗтересси пулса тăрать. Никамăн та мар, вӗсен молотилкăсене халех талăкра 20-шер сехетрен кая мар ӗҫлеттермелле тăвас пулать. Кашни молотилкăпа авăн ҫапнă ҫӗрте туллин усă курмалла. Уяр, хӗвеллӗ ҫанталăка кӗтсе мар, витнӗ итемсемпе кирлӗ пек усă курса, авăна кирек мӗнле ҫанталăкра та ҫапмалла тăвас пулать. Молотилкăсем ҫителӗклӗ таран ҫук ҫӗрте авăна тăпачăсемпех ҫапмалла.

Колхоз тата МТС руководителӗсен итем ҫинчи ӗҫсене лайăх йӗркелесе пымалла. Колхозниксен ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетмелле. Авăн ҫапнă ҫӗрте машинист тӗп вырăн йышăнса тăрать. Вăрҫă вăхăтӗнче машинистсен ӗҫне нумай ҫӗрте ҫӗнӗ ҫынсем тăнă. Вӗсене ӗҫре пулăшса, вӗрентсе пымалла.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнӗ обязательствăсене кашни колхоз чыслăн пурнăҫлама тивӗҫлӗ. Аслă уява авăн ҫапас ӗҫе ăнăҫлăн вӗҫленипе кӗтсе илер. Молотилкăсене талăкра 20 сехетрен кая мар ӗҫлеттернипе, авăна кунӗн-ҫӗрӗн ҫапнипе тата ку ӗҫре витнӗ итемсемпе кирлӗ таран усă курнипе авăна тӗплӗн ҫапса пуҫтарар

Совет Информаци Бюровӗнчен

Октябрӗн 21-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 21-мӗшӗнче пирӗн войскăсем противникпа Сталинград районӗнче тата Моздок районӗнче ҫапăҫнă.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшăну та пулман.

Финн заливӗнче пирӗн карапсем противникăн пӗтӗмпе 15 пин тонна водоизмещениллӗ виҫӗ транспортне путарнă. Хура тинӗс ҫинче пирӗн карап румынсен «Король Фердинанд» йышши эсминецне путарнă.

* * *

Сталинград районӗнче противникăн пехотипе танкӗсем пирӗн позицисене темиҫе хутчен атакăланă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, противника пысăк ҫухатусем кӳнӗ. Пӗр завод районӗнче пирӗн боецсем темиҫе ҫурта йышăннă, 150 гитлеровеца вӗлернӗ, минометсен 2 батарейине тата пулеметсен 5 точкине пӗтерсе тăкнă. Бронебойщик Громовой юлташ наступлени тăвакан противникăн флангне кӗрсе кайнă та, противотанковăй пăшалпа тӗл персе, нимӗҫсен 2 танкне пӗтерсе тăкнă. Пирӗн артиллери нимӗҫсен 9 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янă тата тăшманăн пехотине 2 ротăна ҫити пӗтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланăҫнерехри участоксенчен пӗринче пирӗн чаҫсем активлăн ҫапăҫнă. Ытти участоксенче икӗ енӗ те пӗр-пӗрин ҫине тупăпа тата минометпа персе тăнă тата вырăнти ҫапăҫусем пынă. Н-ски чаҫăн боецӗсем гитлеровецсен темиҫе атакине сирсе янă, противникăн 2 противотанковăй орудине, боеприпассен складне пӗтерсе тăкнă тата пӗр ротăна ҫити пехотăна вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн чаҫсем малтанхи позицисенех йышăнса тăнă, ҫапăҫуллă разведкăсем тунă тата уйрăм участоксенче противникăн атакисене сирсе тăнă. Н-ски гвардейски чаҫăн боецӗсем нимӗҫсен 2 батальона ҫити пехотипе 25 танкӗ тунă атакăна сирсе янă. Ҫав ҫапăҫура нимӗҫсен 5 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янă тата противникăн салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити вӗлерсе тăкнă. Гварди лейтенанчӗ Кузьмин юлташ гранатăсен ҫыххине вăркăнтарса нимӗҫсен пӗр танкне ҫӗмӗрнӗ, гварди красноармеецӗ Антипов юлташ ҫунакан шӗвек тултарнă бутылка ывăтса ярса пӗр танка вут тивертнӗ, унтан тухса тарма хăтланнă нимӗҫсен танкисчӗсене пурне те вӗлерсе пӗтернӗ. Пирӗн автоматчиксем, Богузиза юлташ командир пулса ертсе пынипе, пӗр ҫапăҫура 40 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хӗвелтухăҫнерехре пирӗн чаҫсем противникăн атакисене сирсе тăнă. Пӗр высота районӗнче нимӗҫсем пирӗн тӗреклетнӗ пунктсене пилӗк хутчен атакăланă, анчах та атакисем ăнăҫман, вара вӗсем хăйсен малтанхи позицийӗсем ҫине чакнă. Ҫав высоташăн пынă ҫапăҫусенче противникăн пехотине 2 ротăна ҫити вӗлерсе тăкнă. Ытти участоксенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ. Санинструктор Вохлянцев юлташ юлашки вăхăтра, противник персе тăнине пăхмасăр, ҫапăҫу хирӗнчен аманнă боецсемпе командирсене 50 ҫынна йăтса тухнă.

* * *

Орел облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ фронт ҫумӗнчи тăрăхра нимӗҫсем ҫирӗплетнӗ пӗр халăх пурăнакан пункта хăюллăн тапăннă. Совет патриочӗсем 40 оккупанта вӗлернӗ, 8 лава, 6 станковăй пулемета пӗтерсе тăкнă, боеприпассемпе снарядсен складне сирпӗнтерсе янă. Ҫакăн пек трофейăсем тытса илнӗ: 2 пулемет, 24 винтовка тата 11 пин винтовка патронӗ. Тепӗр отрядри партизансем юлашки 10 кун хушшинче тăшманăн войскăсемпе хӗҫпăшалсем турттарса пыракан 3 эшелонне ӳпӗнтерсе янă. 56 вагон тата 10 платформа ҫӗмӗрӗлнӗ, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсем нумай пӗтнӗ.

* * *

Ленинград облаҫӗнчи партизансен пӗр ушкăнӗ нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен 4 поездне ӳпӗнтерсе янă, вӗсенчен пӗри горючи турттарса пынă пулнă.

* * *

Румынсен 1-мӗш пехотнăй дивизийӗнчи 1-мӗш артиллери полкӗнчен тыткăна лекнӗ салтак Ион Пуц ҫапла каласа панă: «Сентябрь уйăхӗнче пирӗн дивизие Драголина генерал килчӗ. Штаб умне пиӗтӗ нумай салтак пухăнса тăчӗ. Генерал тухнă хыҫҫăн ушкăнран ҫапла кăшкăрнисем илтӗнчӗҫ: «Ярăр пире каялла, киле», «Пирӗн кунта вилес килмест». Жандармсем йӗркелӗх тăвас тесе тем пек хăтланса та йӗркелӗх тăваймарӗҫ».

* * *

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем Смоленск облаҫӗнчи хресченсене ҫаратаҫҫӗ, вӗсене налогсемпе сывлама та памаҫҫӗ. Стодолищенски районри хресченсене нимӗҫсем кашни гектартан 30 пăт ыраш памалла тунă. Выҫлăхпа ҫуклăхăн вӗҫнех ҫитнӗ хресченсем гитлерла влаҫсен распоряженине пурнăҫлама килӗшмен. Фашистла ирсӗрсем халăха калама ҫук хаяррăн асаплантарма тытăннă. Гитлерла бандитсем 37 колхознике асаплантарса, персе е ҫакса вӗлернӗ.

* * *

Гастаррон районӗнче (Франция) патриотсем нимӗҫсен ҫар складне тапăннă. Хӗҫпăшалланнă французсем кăнтăрла часовойсене вӗлернӗ те склада кӗрсе кайса 6 пулемет, 40 винтовка, темиҫе пин патрон илсе тухнă, унтан тарса пытаннă.

Октябрӗн 22-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 22-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскăсем противникпа Сталинград районӗнче тата Моздок районӗнче ҫапăҫнă. Ытти фронтсенче нимӗнле улшăну та пулман.

Хура тинӗс ҫинче пирӗн карапсем противникăн пӗтӗмпе 13.000 тонна водоизмещениллӗ виҫӗ вспомогательнăй суднипе пӗр транспортне путарнă.

* * *

Сталинград районӗнче Н-ски чаҫăн боецӗсем противникăн пехотипе танкӗсен атакине сирсе янă. Ҫав ҫапăҫура гитлеровецсене пӗр ротăна ҫити пӗтерсе тăкнă. Тепӗр участокра гвардеец-минометчиксем нимӗҫсен 100 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тăкнă, 5 танкне ҫунтарса янă тата минометсен икӗ батарейине пусарса лартнă. Минăсем хурса тухнă вырăнта нимӗҫ разведчикӗсен взводне пӗтерсе тăкнă.

Сталинградран кăнтăртарахра пирӗн разведчиксем миномет батарейине, 6 пулемета тата 70 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланăҫнерехре Н-ски чаҫăн боецӗсем противникăн траншейисене ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнă та штык вӗҫҫӗн ҫапăҫса нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Противникран 2 оруди, 4 миномет, 7 пулемет, радиостанци тата боеприпассен складне тытса илнӗ. Пирӗн артиллери 7 дзота ҫӗмӗрнӗ тата противникăн миномет батарейине, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн чаҫсем противникăн темиҫе уйрăм группине, пӗрле 300 ҫын шутланаканскерсене, пӗтерсе тăкнă. Старши сержантăн Пашистовăн зенитнăй орудийӗн расчечӗ нимӗҫсен бомбардировщикне персе ӳкернӗ.

* * *

Воронеж районӗнче старши сержант Козлов ертсе пыракан артиллеристсем ҫӗрле хăйсен орудине противникăн укрепленийӗсен ҫывăхнех илсе пырса лартнă. Тул ҫутăлнă чухне боецсем ҫав орудипе персе 5 дзота ҫӗмӗрнӗ тата противникăн темиҫе огневой точкине пусарса лартнă. Снайперсем Медянский, Антырьев, Чернов тата Макарочкин юлташсем тăватă кун хушшинче нимӗҫсен 86 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тăкнă.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланаҫ фронтӗнче икӗ енӗ те пӗр-пӗрин ҫине артиллерипе сайра хутран перкелесе тăнă. Пастух юлташ командир пулса тăракан артиллери подразделенийӗ тăшманăн 3 дзотне, 3 минометне, противотанковăй оборонăн орудине тата 6 пулеметне пӗтерсе тăкнă. Мельник юлташăн оруди расчечӗ темиҫе кун хушшинче тăшманăн 8 автомашинине тата 105 миллиметрлă орудине прислуги-мӗнӗпех пӗтерсе тăкнă. Лейтенантсем Васильевпа Солдатенко юлташсем ертсе пыракан сапер-разведчиксен ушкăнӗ темиҫе кун хушши тăшманăн тылӗнче кӗрешнӗ. Разведчиксем противникăн икӗ поездне ӳпӗнтерсе янă, 5 кӗперне сирпӗнтернӗ тата нимӗҫсен 100 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тăкнă.

* * *

Украинăн районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ противникăн поездне сирпӗнтерсе янă. Взрыва пула тата ун хыҫҫăнхи крушение пула нимӗҫсен нумай салтакӗпе офицерӗ вилнӗ тата аманнă.

Сентябрь уйăхӗнче Смоленск облаҫӗнчи партизансен отрячӗ нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен 11 поездне ӳпӗнтерсе янă. Унсăр пуҫне, ҫав отрядри партизансемех 600 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ, противникăн пӗр танкеткине тата темиҫе автомашинине пӗтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районӗнче кӗрешекен Н-ски чаҫăн боецӗсем ҫак кунсенче нимӗҫсенчен пӗр высотана тасатнă. Тытса илнӗ окопсенче фашистла ирсӗрсем асаплантарса вӗлернӗ 9 красноармеецăн виллисене тупнă. Гитлерла пуҫкасакансем хăйсем патне тыткăна лекнӗ аманнă красноармеецсене нумайччен асаплантарнă. Вӗсен аллисем ҫинче «СССР» саспаллисем касса кăларнă, ҫамкисемпе кăкăрӗсем ҫинче пилӗк кӗтеслӗ ҫăлтăрсем касса кăларнă.

* * *

Эльзас халăхӗ нимӗҫ оккупанчӗсене кураймасть. Эльзасра пурăнакан пиншер ҫамрăксем Германи ҫарне каяссинчен пăрăнса юлаҫҫӗ. Ҫара илнӗ ҫамрăксем нумайӗшӗ хăйсен чаҫӗсенчен тарнă. Урбейсран инҫех мар вырăнта Эльзасран ҫара илнӗ ҫамрăксен ушкăнӗ казармăра нимӗҫ офицерне тата фельдфебеле вӗлернӗ те тарса пӗтнӗ.

Танксен „Тракторист Чувашии“ колоннине тума

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ, октябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Елчӗк районӗнчи трактористсем танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума чӗнсе каланине сӳтсе-явнă хыҫҫăн МТС-ăн пур трактор бригадисенче те ҫак ӗҫ валли укҫа-тенкӗ пухасси вăйлăн саралса кайрӗ. Тракторсен пӗррмӗш бригадинче (бригадирӗ С. Эсенкин юлташ) кӗске вăхăт хушшинчех 10 пин тенкӗ ытла пухăннă. Бригадир Степан Эсенкин чи малтан хăй 2.000 тенкӗ панă. Ун хыҫҫăн М. Петровпа В. Индейкин трактористсем 1.600-шер тенкӗ, трактористка Мария Мамуткина 1000 тенкӗ панă.

Хӗрарăм трактористкăсен А. Макаров юлташ ертсе пыракан бригадинче те танксен колоннине тума 8.000 тенкӗ укҫа пухнă. Ҫак ӗҫ валли пурӗ 32.000 тенкӗ укҫа пухнă. Укҫа пухас ӗҫе малалла та туса пыратпăр.

Г. ИВАНОВ.
МТС директорӗ.



ХУРА ТИНӖС ФЛОЧӖ. 1-мӗш рангри капитан А. М. Гущин гварди экипажӗн командирӗ пулса тăракан гварди карапӗн экипажӗ гитлерла захватчиксемпе паттăррăн кӗрешет. Ӳкерчӗк ҫинче: Зенитнăй тупăсен расчечӗ тăшман авиацийӗн тапăнăвне сирсе ярать.

В. ИВАНОВ фото ӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăрту

Чугунҫул транспорчӗ валли вутă хатӗрлес ӗҫ республикăра мӗнле пырать

Республикăри Вăрман промышленность халăх комиссариачӗн предприятийӗсемпе леспромхозӗсем чугунҫул транспорчӗ валли вутă хатӗрлес тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ. Октябрӗн 19-мӗшӗ тӗлне вӗсем 1942 ҫулăн иккӗмӗш ҫурҫулӗнчи ӗҫсен планне вутă касса хатӗрлес енӗпе 74 процент, турттарса кăларас енӗпе 62 процент тултарнă.

Вăрман хатӗрлекен уйрăм предприятисенчен хальхи вăхăтра ҫак ӗҫре Йӗпреҫпе Вăрнар леспромхозӗсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем вутă хатӗрлес ӗҫӗн иккӗмӗш ҫурҫулти планне ҫӳлте асăннă вăхăт тӗлне 70—80-шар процент тултарнă. Йӗпреҫпе Вăрнар леспромхозӗсем лайăх ӗҫлени вăрманти рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янинчен, ăмăрту результачӗсене тăтăшах тӗрӗслесе тăнинчен, тухăҫлă ӗҫлекенсене премилесе пынинчен килет. Кусемсӗр пуҫне тата Йӗпреҫ леспромхозӗнче вутă хатӗрлекен районсем хăйсем пӗр-пӗринпе ăмăртăва тухнă. Хальхи вăхăтра ҫак ăмăртура Йӗпреҫ районӗ лайăх результатсем кăтартать, вăл район иккӗмӗш ҫурҫулти задание ытлашшипех тултарнă. Шупашкар районӗ те начар мар ӗҫлет, вăл хăйӗн заданине вутă хатӗрлес енӗпе 100,5 процент, турттарас енӗпе 92,5 процент тултарнă.

Анчах чугунҫул валли вутă хатӗрлес ӗҫре юлса пыракан предприятисемпе леспромхозсем те пур-ха. Ҫурҫулти задание ҫӳлте асăннă срок тӗлне Канашпа Кире леспромхозӗсем, Буински тата Алтышевăри лесозаводсем ҫурри ытларах ҫеҫ тултарнă. Ҫӗмӗрлери тата Хӗрлӗ Чутайри механизациленӗ вăрман пункчӗсен ӗҫ хăвăртлăхӗсем те ҫителӗксӗртерех темелле. Хӗрлӗ Чутай пункчӗ вара хатӗрлес енӗпе начар мар ӗҫленӗ вăхăтрах турттарас енӗпе ытла та юлса пырать. Ку ӗнтӗ унти ертсе пыракан работниксем касас тата турттарас ӗҫсене пӗр пек организацилеменнинчен, турттарас ӗҫсен графикне пурнăҫа кӗртессишӗн кӗрешменнинчен килет.

Уйрăм предприятисемпе леспромхозсем ҫакăн пек сӳрӗкрех ӗҫлени тата, тепӗр енчен, вӗсем ҫумне ҫирӗплетнӗ районсем ӗҫ вăйӗ—лашасемпе ҫынсем—ҫителӗксӗр панинчен килет. Ӗҫ вăйӗ парассине уйрăмах Канаш, Ҫӗмӗрле, Хӗрлӗ Чутай, Первомайски, Елчӗк, Тăвай тата Вăрмар районӗсем хакламаҫҫӗ. Ку районсенчен ӗҫлеме тивӗҫлӗ ҫынсемпе лашасем ҫури те ӗҫлемеҫҫӗ. Канаш районӗнчен, тӗслӗхрен, Йӗпреҫ леспромхозӗнче план тăрăх ҫуран 35 ҫын, лашапа 30 ҫын ӗҫлемелле пулсан, ҫуран 7 ҫын кăна ӗҫлет, лашпа ӗҫлекенсем вара пачах та ҫук.

Чугунҫул транспорчӗ валли вутă хатӗрлес ӗҫ—оборонăллă питех те пысăк ӗҫ. Транспорта кирлӗ топливăна вăхăтра тата ҫителӗклӗ хатӗрлесе панинчен поездсем пӗр чăрмавсăр ҫӳресси, фронта кирлӗ грузсене ăнăҫлăн ҫитерсе парасси килет. Пирӗн вăрман промышленность предприятийӗсемпе районсен задачи вутă хатӗрлевӗн хăвăртлăхӗсене ӳстерессн, Октябрьти революци 25 ҫул тултарнине ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илесси пулать.

Ăмăртура лайăх ӗҫлекенсем

КАНАШ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри цехсем, Октябрь уявӗ ячӗпе илнӗ обязательствăсене пурнăҫа кӗртессишӗн кӗрешсе, ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тăваҫҫӗ. Токарев, Соколовский тата Ковалерчик юлташсем ертсе пыракан цехсем иртнӗ ҫурӳйăхри заданне ытлашшипех тултарчӗҫ. Ҫак цехсен производствăри ăнăҫлăхне унти рабочисемпе работницăсем пысăк тухăҫлăхпа ӗҫлени татса парать. Сăмахран, Ковалерчик юлташăн цехӗнчи рабочисем пурте нормăна ирттерсе тултараҫҫӗ, 50 проценчӗ стахановецсем шутланаҫҫӗ. Вӗсенчен Остапец, Оверченко, Тунильман, Гецевич, Тельнов тата Свиридова юлташсем нормăна икӗ-виҫӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ.

Октябрь уявӗ умӗнхи ăмăртура йываҫсем каскалакан цех коллективӗ те малта пырать. Коллектив иртнӗ ҫурӳйăхри задание 132 процент тултарчӗ. Андронов, Олесюк, Козубский, Мордобенков, Енушов тата ытти юлташсем те—цехри чи тухăҫлă ӗҫлекен стахановецсем, сменăри нормăна тăтăшах 200—300 процент тултараҫҫӗ.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарӗ.

Ҫӗнӗ арман ӗҫе кӗчӗ

Шупашкарти механизациленӗ арман сентябрьти производство программине 104,6 процент тултарнă. Арман ку уйăхра та йӗркеллӗ ӗҫлет, талăкри графика ытлашшипех тултарса пырать. Иванов, Жданов тата Моряков мельниксем ӗҫ нормине пӗрмаях ирттерсе тултараҫҫӗ.

Армансен тресчӗ нумай пулмасть ҫӗнӗ арман туса пӗтерсе ӗҫе ячӗ. Ҫӗнӗ арман талăкне 20 тонна ҫăнăх авăртать.

Г. АФАНАСЬЕВ,
Армансен тресчӗн главнăй инженерӗ.

Ăмăртăва организацилемен ҫӗрте

ЭЛӖК. (Хамăр корр.). Районри апатҫимӗҫ комбиначӗ виҫҫӗмӗш уйăх ӗнтӗ хăйӗн производствăллă заданине тултарса пыраймасть. Август уйăхӗнче вăл плана 80 процент, сентябрьте — 81 процент ҫеҫ тултарнă. Комбинат ку уйăхра та начар ӗҫлет.

Комбинат руководителӗсем (директорӗ Хазацкий юлташ) ӗҫ япăх пынине тӗрлӗ сăлтавсемпе витме тăрăшаҫҫӗ: е вӗсен чӗртавар ҫитмест, е вӗсене кирлӗ чухлӗ ӗҫ вăйӗ памаҫҫӗ. Ҫав вăхăтрах хăйсен ҫитменлӗхӗсене пӗтерессишӗн тăрăшмаҫҫӗ.

Комбинатра ҫитменлӗхсем сахал мар. Рабочисем хушшинчи политикăллă-массăллă ӗҫе япăх туса пыраҫҫӗ. Кунта агитаторсемпе вулавҫăсем ҫук, юлашки вăхăтра рабочисене пӗр доклад та туса паман, хаҫат-журналсем ҫук, стена хаҫачӗ тухмасть. Социализмлă ăмăртăва та тивӗҫлипе организацилемен: рабочисем пӗр-пӗринпе ăмăртма мар, комбинат хăй те уяв умӗнхи ăмăртăва хутшăнман.

Ҫаксене пула ӗнтӗ комбинатра стахановецсем ҫук, чылайӗшсем нормăсене 50—70 процент ҫеҫ тултараҫҫӗ. Тухăҫлăрах ӗҫлекен М. Иванова, А. Егорова, Т. Горшкова юлташсем те сменăра 134 килограмм улма турас вырăнне 130 килограмм таран ҫеҫ тураҫҫӗ.

Комбината сентябрь уйăхӗнче кăна вуншар ҫын ӗҫе кӗнӗ. Анчах вӗсене производствăра мӗнле пулмалли ҫинчен, ӗҫ инструменчӗсемпе мӗнле усă курмалли ҫинчен вӗрентмен.

Рабочисене тухăҫлăн ӗҫлеме чăрмантаракан ҫитменлӗхсем татах та пур. Инструментсем, уйрăмах ҫӗҫӗсем ҫителӗксӗр: каҫхине ӗҫлекенсем валли ҫутă начар.

Комбинат дирекцийӗ хӗле хатӗрленме те васкамасть. Овощехранилещесем тăвас ӗҫе халӗ ҫеҫ тытăннă. Ҫавна пула колхозсенчен пахча-ҫимӗҫсене йышăнмасăр тăраҫҫӗ, леҫме пырсан каялла тавăрса янисем те пулнă.

Х. ЛИСИН.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли—ăшă тумтирсем

ТĂВАЙ, октябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем валли ăшă тумтирсем пухас ӗҫе активлăн хутшăнаҫҫӗ. Октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне районӗпе 85 кӗрӗк пиншак, 165 килограмм ҫăм, 88 мулаххай, 23 мăшăр ҫăматă, 300 ытла тир, 61 мăшăр ҫăм перчакта, 45 мăшăр ҫăм носки, 65 питшăлли тата тăхăнмалли ăшă япаласем илме 1.750 тенкӗ укҫа пухăннă.

Ăшă тумтирсем пухас ӗҫре уйрăмах Тăрмăш ялсоветӗнчи Ленин ячӗпе тăракан, Элпуҫӗнчи «КИМ», Хучелти «Мичурино» колхозсенчи комиссисем пуҫарулăх кăтартаҫҫӗ. «Мичурино» колхозри ăшă тумтирсем пухас тӗлӗшпе ӗҫлекен комисси (председателӗ А. Иванов юлташ) 20 тир, 12 килограмм ҫăм, 5 мăшăр ҫăматă пухнă. Тăрмăшри Ленин ячӗпе тăракан колхозри комисси кӗске вăхăт хушшинчех 123 тир, 8 килограмм ҫăм тата ытти япаласем пухнă. Ку тӗлӗшпе уйрăмах комсомолец В. Иванов тăрăшса ӗҫленине палăртмалла.

А. САЛМИН.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Хӗрлӗ Чутай районӗнчи ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсем валли ăшă тумтирсем хатӗрлесе парас ӗҫе чыслăн туса пыраҫҫӗ. Октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне районри ӗҫҫыннисем 895 тир, 500 килограмм ҫăм, 62 мăшăр пир тăла, 113 мăшăр кӗпе-йӗм, 120 алшăлли, 64 мулаххай, 100 мăшăр ҫăматă, 31 мăшăр тир-сăран перчатка, 80 кӗрӗк пиншак, 40 мăшăр ҫăм перчакта, 28 мăшăр ҫăм носки, икӗ простыня тата ытти нумай япаласем пухса пачӗҫ.

Ăшă япаласем пухас ӗҫ «Красная звезда» колхозра организованно пулса пырать. Ку колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсем валли 45 тир, 40 килограмм ҫăм, 12 мăшăр ҫăм перчатка пухса панă. «Сталь» колхоз членӗсем 38 тир пухса панă. Ҫак питех те кирлӗ ӗҫе «Ҫӗнӗ пурнăҫ», «Волна» колхозсем те чыслăн туса пыраҫҫӗ.

А. СУДЕРКИН,
Ăшă япаласем пухас тӗлӗшпе ӗҫлекен районри комисси председателӗ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Сталинград районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Уяр та хĕвеллĕ кунсем вырăнне кĕркуннехи çумăрлă çанталăк килсе çитрĕ. Çулсем йĕпеннĕçĕ, ут-пу витĕр шăтарса тухакан сивĕ çил вĕрет. Çапах та Сталинградшăн пыракан кĕрешу пĕрре те вăйсăрланмасть. Тăшман малтанхи пекех малалла шăвăнма тăрăшать.

Енер тăшманăн пехоти, танксем пулăшса пынипе, хĕвеланăç енчен заводсенчен пĕрне атакăланă. Нимĕçсен ытти группировкисем, танксемпе авиаци пулăшса пынипе, пирĕн подразделенисене çурçĕр енчен атакăланă. Хаяр та вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Часчасах штык вĕççĕн тăрса çапăçнă.

Нимĕçсем пирĕн пĕр подразделение çавăрса илме хăтланнă. Анчах подразделени командирĕ хăвăрттăн оборонăна йĕркеленĕ. Фашистсем пирĕннисем персе тăлипе питĕ пысăк çухатусем тусиĕ, апла пулин те пирĕн подразделение çавăрса илме тăрăшма пăрахман. Вара пирĕн боецсем контратака тунă, нимĕçсене штык вĕççĕн тăрса çапăçтарнă. Нимĕçсен пехотине хўтĕлесе пыракан танксен аяккалла пăрăнса, пеме чарăнмалла пулнă. Çав тытăçăва пирĕн енчен темиçе çĕр боецпа командир хутшăннă, гитлеровецсем енчен икĕ хут ытларах çын хутшăннă. Çав çапăçу вăл кас пуличченех пынă. Пирĕн окопсем патĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем сăрт пекех купаланса ларнă. Гитлеровецсем пирĕн подразделение çавăрса илеймен.

Пĕр кун каярах нимĕçсен автоматчикĕсем çĕмĕрсе кĕнĕ районра та хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Паттăррăн кĕрешнĕ хыççăн нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тўснĕ.

Пирĕн боецсем урамра çапăçас тĕлĕшпе пысăк опыт туянчĕç, нимĕçсен танкĕсемпе пехотине иртсе каймалла мар чăрмавсем туса хума вĕренсе çитрĕç. Совет боецĕсем тăшманпа епле çапăçнине ак çак факт аван кăтартса парать. Гитлеровецсем атакăна темиçе вуншар танк тата пехота кĕртсе янă. Çапăçу пĕр талăка пынă. Совет боецĕсем артиллери пулăшса пынипе нумай танксем пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2 батальона çити çапаласа янă. Сергиенко автоматчик пĕр кун хушшинче нимĕçсен 44 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

Çапăçура Начирнерпа Таракуль пулеметчиксем хăйсен паттăрлăхне кăтартнă. Вĕсем нимĕçсен оборонин узелĕпе юнашар çурта вăрттăн кĕрсе вырнаçнă та гитлеровецсем çине вăйлăн пеме пуçланă. Нимĕçсем артиллерипе минометсем илсе пынă та çав çурт çине тăвăллăн пеме тытăннă. Çурт ишĕлсе аннă. Пулемета пусарса лартнă тесе шухăшласа, нимĕçсем питĕ нумайăн кĕпĕрленсе атакăна кайнă. Анчах вĕсем Мохов лейтенант командир пулса ертсе пыракан ротăн вут-çулăмĕ айне пулнă. Çав взвод нимĕçсем ишнĕ çуртпа юнашар çуртра лайăх пытанса ларнă пулнă. Нимĕçсем аманнисене пăрахса хăварсах каялла тарнă. Ишĕлнĕ çурта юлнă пирĕн пулеметчиксем пĕртте сиенленмен.

Н. МАРКОВСКИЙ,
Д. ЩУКИН.

Моздок районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Моздок районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕç командованийĕ кунта хăйĕн инçетри тылĕнчен тата фронтăн ытти участокĕсенчен пехота, артиллери, танксем, авиаци вĕçĕмсĕр илсе пырса тăрать. Тăшман, пысăк çухатусем тўссе те пулин малалла çĕмĕрсе кĕрес тесе, пирĕн рубежсене вĕçĕмсĕр атакăлать.

Кавказа хўтĕлекенсем тăшман урса кайса хĕснине питĕ çирĕп тăрса сирсе пыраççĕ. Н-ски гвардейски часть тăшманăн темиçе атакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсем малтанхи атакăна икĕ батальон пехотăпа тата вĕсене хўтĕлесе пыракан 25 танкпа пуçласа янă. Тăшман пирĕн чаçăн флангне пырса çапма шухăшланă. Гвардеецсем, артиллерипе таччăн çыхăнса кĕрешсе, çирĕппĕн хирĕç тăнă. Фашистсем нимĕнле çитĕнў те тăваймасăрах, çапăçу хирне çĕмĕрнĕ е çунтарса янă 5 танк тата пĕр ротăна çити салтаксемпе офицерсене пăрахса хăварса, каялла чакнă. Нимĕçсен ун хыççăнхи атакисене те çавăн пекех вĕсене пысăк çухатусем тўстерсе сирсе пăрахнă.

Совет бронебойщикĕсем фашистсен броньăланă машинисене паттăррăн пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Н-ски гвардейски чаçра хальхи вăхăтра 5-шер е 10-шар танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă боецсем сахал мар ĕнтĕ.

Сăртлă-туллă районсенче нимĕçсем пирĕн войскăсен çапăçу йĕркисем витĕр пĕчĕк группăсемпе сăрхăнса кĕме хăтланнă. Тăшман çапла тума хăтланнине пур çĕрте те сирсе пăрахнă. Нумай вырăнсенче çав группăсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă.

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Пирĕн землякосем

Хăюллă связист Владимир Миговаров

Фронтăн малти линийĕ. Тупăсемпе автоматсенчен вĕçĕмсĕр пенĕ, снарядсемпе минăсем çурăлнă. Кунта фронтри [illegible]

[illegible]

Е. ВОЛКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Район кая юлса пынине пĕтермелле

Чкаловски районри коммунистсен пухăвĕнчен

Çак кунсенче пулса иртнĕ парти пухăвĕнче Чкаловски районри коммунистсем ВКП(б) Чăваш Обкомĕн 12-мĕш пленумĕн итогĕсене сўтсе-яврĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Т. Валеев юлташ хăйĕн докладĕнче ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ Чкаловски район ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе кая юлса пынине палăртни çинчен, районри партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе питех те начар ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçе сўрĕккĕн туса пынă пирки ĕнтĕ район октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна обязательнăй йĕркепе тырă тăратмалли плана 70 процент, МТС ĕçĕшĕн натуроплата тўлемелли обязательствăна 35 процент тата Хĕрлĕ Çарăн фондне тума тырă хывас плана 21 процент çеç тултарнă. Çĕрулмипе пахчаçимĕç обязательствисене пурнăçласси те çителĕксĕр пулса пырать. Партин колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсемпе ялсенчи уйрăм коммунистсем, колхозсемпе ялсоветсен председателĕсем тата хатĕрлев наркомачĕн районри уполномоченнăйĕ чылай колхозсем, единоличниксемпе колхозниксен хуçалăхĕсем государство умĕнчи хăйсен парăмĕсене татмасăр тăни çине йăваш чунлăн, тимсĕррĕн пăхаççĕ, ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине кĕтсе пурăнаççĕ. Çавна пула Ленин ячĕпе тăракан колхоз 1942 çулшăн государствăна тырă памалли плана 12 процент, «Первомайск»—16 процент, «Первое мая», «Кзыл Иолдыс»—22 процент, «Пламя Октября»—38 процент çеç тултарнă. Районри 30 колхозран 18-шĕ Хĕрлĕ Çарăн фондне тырă пĕр центнер та хывман.

Докладчик та, прение тухса каланă юлташсем те район государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратас тĕлĕшпе кая юлнă факт çинче ытларах чарăнса тăчĕç, çав вăхăтрах çак ĕçе чăрмантарса тăракан тĕп сăлтавсене уçса памарĕç.

Тата çакă хытă тĕлĕнтерчĕ: пуху ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси мĕнле пулса пыни çинчен сўтсе-меврĕ, апла пулин те СССР хатĕрлев наркомачĕн районри уполномоченнăйĕ Седаков тата райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Ахсянов юлташсем çак ыйтупа прение те тухса каламарĕç. Çакă вăл ВКП(б) райкомĕ районри парти пухăвне начар хатĕрленсе ирттернине кăтартса парать.

Ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси юлса пыни колхозсенче авăн çапас ĕçе сўрĕккĕн организацилениччен, хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарса тăма уйăрнă бригадăсене йĕркеллĕ ĕçлеттерменнинчен килет. Чылай колхозсенче авăна тăпачăпа çапассине кирлĕ пек туса пымаççĕ, молотилкăсене туллин, талăкĕпех ĕçлеттермеççĕ. Машинно-тракторнăй станцин молотилкисем талăкра 5—6 сехет çеç ĕçлеççĕ, çăмăрлă кунсенче вара пачах та ĕçлемеççĕ. Районри колхозсен руководителĕсем кăçал витнĕ итемсем çĕнĕрен тăвассипе вĕсене юсасси çине ответсăрла пăхнă, юрăхлă витнĕ итемсемпе те халĕ тивĕçлипе усă курмаççĕ. Çавăнпа авăн çапас ĕç кăçал та пĕлтĕрхи пек хĕле юлас хăрушлăх умĕнче тăрать.

Прение тухса калакансем авăн çапас, государствăна тырă парас тĕлĕшпе колхозсене панă пилĕккунлăх заданисене пурнăçласси çине колхозсенчи хăшпĕр руководительсем сўрĕккĕн пăхни çинчен каларĕç, ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн колхозсене янă представителĕсем хăйсене хушнă ĕçе ячĕшĕн çеç тума пăхнине палăртрĕç.

Пуху ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçе тĕпрен вăйлатса, Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă тĕле государство умĕнчи парăмсене пур колхозсем, единоличниксемпе колхозниксен хуçалăхĕсем енĕпе те парса татмалла тăвас тĕлĕшпе мероприятисем палăртрĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

ЧКАЛОВСКОЕ, (**«Чăваш Коммуни корр.**).

Агитколлективсем вăрçă кунĕсенче

ВКП(б) Йĕпреç райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ кăçал районра 142 хутчен докладсемпе лекцисем туса ирттернĕ. Вăл шутра колхозсенче 98 хутчен ирттернĕ.

Колхозсенчи агитколлективсем политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçе начар мар туса пыраççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра кулленхи политикăна вĕренмелли кружок организациленĕ. Вăл кружока парти райкомĕн пропагандисчĕ М. Крузман юлташ ертсе пырать. Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ, вăлах агитколлективăн руководителĕ Касино юлташ колхозниксемпе колхозницăсене уборка ĕçĕсене пурнăçлама мобилизацилесе пынипе, колхоз тырпулсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа пухса кĕртрĕ. Колхоз государствăна тырă памалли обязательствăна паянхи куна 98 процент тултарнă, пахча-çимĕçсем памалли плана 132 процент пурнăçланă. Государствăна аш-какай памалли плана тултарса, 1943 çулшăн 1,63 центнер панă.

Хумпуç Патăрьелĕнчи пуçламĕш парторганизаци те политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçе начар мар туса пырать. Уборка вăхăтĕнче агитаторсем хăйсен ĕçне хире куçарнă. Вĕсем колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ, кашнă вăхăтра вĕсемпе калаçусем ирттернĕ, вĕсене хаçат-журналсем вуласа панă, стена хаçачĕсем кăларнă. Е. Игнатьева агитатор, колхозниксемпе пĕрле тырă вырнă çĕрте ĕçлесе, нормăна 120 процент тултарса пынă, колхозниксене хăйĕн пархатарлă ĕçĕпе пример кăтартса хавхалантарнă. Колхоз уборка ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ, октябрĕн 2-мĕшĕнче авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пĕтĕмпех пурнăçанă.

«Коминтерн» колхозри агитколлектив (руководителĕ коммунист С. Ухтяков юлташ) уйрăмах лайăх ĕçлет. Кунта кашни агитатор — ĕçĕн организаторĕ. К. Тимофеева юлташ бригадинче колхозниксем пурте нормăна 150—200 процент тултарса ĕçлеççĕ. Уборка вăхăтĕнче кашни 3—4 кунра пĕрре колхозри стена хаçачĕ тата бригадăсенчи боевой листоксем тухса тăнă.

«Коминтерн» колхоз уборка ĕçĕсене 14 ĕç кунĕнче ăнăçлăн вĕçленĕ. Государствăна тырă парса татнă, пахча-çимĕçсем хатĕрлемелли плана 102 процент пурнăçланă.

«Кооплеспром» промартельри пуçламĕш парторганизацин агитколлективĕ (руководителĕ парторг Громов) агитациллĕ-массăллă ĕçе производствăри ыйтусемпе аван çыхăнтарса пырать. Агитаторсем, бригадăсенче, цехсенче тата рабочисен хватерĕсенче пулса, вĕсемпе кашни кун калаçусем ирттереççĕ, вĕсене хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, рабочисем хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илнĕ. Я. Пименовпа В. Федоров стахановецсем кулленхи ĕç нормине 150 процентран кая мар тултарса пыма пулнă. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне ĕçпе пурнăçласа пыраççĕ. Я. Пименов юлташ нормăна 160 процент, В. Федоров юлташ 150 процент тултарса ĕçлеççĕ. Ăмăртăва хутшăннă хыççăн нумай рабочисем ĕç тухăçлăхне ўстерчĕç. Мокеев юлташ сменăри нормăна 225 процент, Сидоров 160 процент пурнăçласа пыраççĕ.

Политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçе татах та лайăхлатас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ çак уйăхра агитаторсемпе 7 кунлăх семинар ирттерет. Семинарсем районра 9 пунктра пулса иртмелле.

Д. МИХАЙЛОВ.

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă тĕле

Чăваш АССР государство издательстви Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă тĕле çакăн пек брошюрăсем кăларать:

1. «Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарни».
2. П. Григорьев—«Октябрь революцийĕ пулнăранпа 25 çул».

Çав брошюрĕсенче пирĕн çĕршывра иртнĕ 25 çул хушшинче социализм строительствинче тунă çитĕнўсене кăтартнă, пирĕн тыл, унăн çыннисем отечественнăй вăрçă кунĕсенче тăшмана татăклăнах çĕнтерме Хĕрлĕ Çар валли мĕн кирлĕ, çавсене пурне те ытлăнçитлĕн туса парас тĕлĕшпе паттăррăн ĕçленине кăтартса панă. Çак брошюрăсем çынçиен фашистсен çарне пурпĕрех çĕнтерессине кăтартса панă. Брошюрăсем пире фронта пулăшас енĕпе тата çинерех тăрса ĕçлеме хавхалантарççĕ.

Агитаци тата пропаганда ыйтăвĕсемпе пухнă темиçе облаçри работниксен канашлăвĕ

КУЙБЫШЕВ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă вăхăтĕнчи агитаци тата пропаганда ĕçĕсен ыйтăвĕсемпе пухнă темиçе облаçри работниксен канашлăвĕ паян хăйĕн ĕçĕсене пĕтернĕ. Вăл канашлăва ЦК ВКП(б) пропагандăпа агитаци управленийĕ пухнă.

Çав канашлура Куйбышев, Саратов, Сталинград, Чкалов тата Пенза облаçĕсенчи, унтан тата Пушкăрт, Чăваш, Мордва, Тутар республикисенчи ВКП(б) Обкомĕсен прапаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕсем, облаçри е республикăри хаçат редакторĕсем тата лектор групписен руководителĕсем пулнă.

Парти обкомĕсен секретарĕсем тата канашлура пулнă ытти çынсем пĕрпĕрне хăйсен ĕçĕсен опычĕ çинчен каласа панă. Сталинград облаçĕнчи ВКП(б) Обкомĕн секретарĕн Водолагин юлташăн выступленийĕ интереслă пулнă, вăл Сталинградшăн пыракан çапăçу условийĕсенче пропагандистсемпе агитаторсем ĕçлени çинчен каласа панă.

Канашлу вĕçĕнче ЦК ВКП(б) членĕ Ярославский юлташ сăмах тухса каланă. Вăл канашлу ĕçĕсене пĕтĕçтерсе, ĕççыннисен анлă массисемпе таччăн çыхăннă агитаципе пропаганда ĕçне урăхлатса, çĕнетесси çинче чарăнса тăнă.

Ют çĕршывсенче

СЕНАТĂН ÇАР КОМИССИЙĔ ÇАРА 18 ТАТА 19 ÇУЛХИ ÇАМРĂКСЕНЕ ИЛМЕЛЛИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНОПРОЕКТА ЫРЛАНĂ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, сенатăн çар комиссийĕ 18 тата 19 çулхи çамрăксене çар службине илмелли çинчен калакан законопроекта ырланă. Представительсен палати вăл законопроекта уншăн 345 сасă, ăна хирĕç 16 сасă парса йышăннă. Комисси çакна палăртса парать: Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен çар министерстви хатĕрленĕ программа тăрăх, Америка çарĕн йышĕ килес çул 7,5 миллион сынна çитмелле.

ГИТЛЕРЛА НАДСМОТРЩИКСЕМ ТАРĂХАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейче украине цейтунг» ятлă гитлерла хаçат—Украинăн оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсен «ялхуçалăх руководителĕсем» питĕ пысăк чăрмавсене тĕл пулаççĕ, тесе тарăхса çырать. Хаçат каланинчен çакă курăнать: çав çаратуçăсем «ирĕксĕр пĕччен пурăнма тивнине» пысăк асаппа тўссе ирттереççĕ, вăл уйрăмах та çĕрле хытă палăрать, «мĕншĕн тесессĕн пур çĕрте те партизансем кĕшĕлтетекен çак çĕршывра нимĕçсене пурăнма питĕ хăрушă. Ялхуçалăх руководителĕсене нумайĕшне партизансем вĕлернĕ».

Оккупациленĕ районсенчи халăх нимĕçсемшĕн ĕçлесшĕн мар. Çав хаçат каланă тăрăх, гитлерла надсмотрщиксен «халăха ĕçе сĕтĕрсе тухма» тивет.

«Дер мейе таг» хаçат тырă вырса пуçтарма вăйпа пухса тăратнă совет çыннисем мĕнле ĕçлени çинчен çапла çырать: «Вĕсем молотилка патĕнче кĕшĕлтетеççĕ. Унта туллăн купи ту пек ўссе пырать. Вăл—Германи валли хатĕрлекен тырă. Хресченсем ĕçе ирхине ирех тухса сĕм-тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ, йывăр ĕçпе асапланаççĕ, анчах та хирсене нумайĕшне вырса пĕтерменха».

Совет хресченĕсем нимĕçсене тырра Германие илсе кайма пур майпа та кансĕрлеççĕ. «Дейче украине цейтунг» хаçат çапла çырать: «Совет партизанĕсем тапăннине нимĕç салтакĕсемпе полицийĕн алла пăшал тытса сирсе пымалла пулать, çав партизансем продовольстви запасĕсене тытса илеççĕ е пĕтерсе хураççĕ»

ФИНЛЯНДИРЕ ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ МАССĂЛЛĂН ХУПАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндире ĕçлекен предприятисен шутне чакарасси, финсен «Хельсингин саномат» хаçачĕ каланă тăрăх, хăрушшăн ўссе кайнă. Сентябрь уйăхĕнче Финляндире промышленность предприятийĕсенчен пиллĕкмĕш пайĕ кăна ĕçленĕ. Пир-авăр фабрикисемпе резина завочĕсен пысăкрах пайĕ ĕçлеме пăрахнă.

Финляндири предприятисем ĕçлеме пăрахнин чи пысăк сăлтавĕсенчен пĕри вăл—чĕртавар çукки. «Хелсингин саномат» хаçат каланă тăрăх, Финляндире промышленность чĕртаварĕсем илсе пымалли план тĕрĕссипе пĕтсе ларнă. Германия хăйĕн Финлянди тĕлĕшпе илнĕ обязательствисене пурнăçа кĕртмест. Çак çулăн малтанхи 6 уйăхĕ хушшинче вăл Финляндие пама пулнă промышленность чĕртаварне унта пĕр тонна та яман.

ФРАНЦИН УКÇА-ТЕНКĔ ТĔЛĔШПЕ ĔÇĔСЕМ ПИТĔ НАЧАР

ЖЕНЕВА, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Францин пурнăçĕ укçа-тенкĕ тĕлĕшпе питĕ йывăрри çинчен гитлерла хаçатсем те çыраççĕ. «Дер мейе таг» хаçат çапла пĕлтерет: Францин государство парăмĕ 1939 çулхи августăн 31-мĕшĕнче 445,7 миллиард франк пулнă пулсан, вăл 1942 çулхи майăн вĕçĕнче 945,5 миллиард франка çитнĕ. Государствăн тупăшĕсем расходсен 30 процентне те, хаçат çырнă тăрăх, Виши правительствин перемири килĕшĕвĕ тăрăх тумалли расходсем 1942 çулăн пĕрремĕш çуррине 78,7 миллиард франка çитнĕ. Вĕсенчен 60,6 миллиард франкне нимĕçсене оккупациллĕ çара усрамашкăн тўленĕ.

ВИШИ ВЛАÇĔСЕМ КОНТРОЛЬЛЕСЕ ТĂРАКАН ТЕРРИТОРИРЕН ÇЫНСЕМ ТАРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Хĕвеланăç Африкăран çапла пĕлтерет: Францин Хĕвеланăç Африкăри территорийĕнчен, Виши влаçĕсем контрольлесе тăраканскертен, Батерста, Фритауна, Анкрана, Браззавиле тата Англипе де Голлĕн Африкăри ытти пункчĕсене пиншер çын тара-тара пыраççĕ. Çапла пĕлтереççĕ: çав территорирен тараканесенчен пиллĕкмĕш пайĕ кăна халь асăннă пунктсене çитет. Ытисене Виши влаçĕсем Дакарта, Бамакора тата Тимбуктура тытатыта тĕрмене хупаççĕ. Таракансене вырăнти йăхсен пуçлăхĕсем тата французсен колонийĕсенчи хăшпĕр чиновникĕсем пулăшаççĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ГОЛЛАНДИЕ ЮНАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла хаçатсен çакна йышăнма тивнĕ: Голланди халăхĕ хăйĕн хальхи пурнăçĕпе килĕшмест, вăл нимĕçсем валли ĕçлесшĕн мар. «Голландия Германия вăрçакан вăрçа—вăл вăрçă мар, тесе шутлать,»—тет «Дейче украине цейтунг» хаçат. Çав хаçат каланă тăрăх, голландецсене халиччен те Германи çарĕ валли хĕçпăшалсем туттарттарма май килмен. Хаçат Голланди халăхне çапла хăратса асăрхаттарать: «Германия хăй вăрçакан вăрçа голландецсем пĕтĕмпех хутшăнни Голландия тĕнчере пурăнассин тĕп условийĕ пулса тăрать тесе шутлать», тет.

НИМĔÇСЕМ ЮГОСЛАВИ ХРЕСЧЕНĔСЕНЧЕН ТЫРРА ТУРТСА ИЛЕÇÇĔ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсем тĕрĕслесе тăракан Белград хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Германин оккупациллĕ влаçĕсем çакăн пек приказ кăларнă: Югослави хресченĕсен хăйсенчен ытлашши тырра халех кăтартса панă приемнăй пунктсене леçмелле. «Ку ĕçе хула халăхне тырă памаллипе тума тивет», тенĕ приказра. Тĕрĕссипе илсен, нимĕçсем çав тырра Германие яма хатĕрленеççĕ. Югослави хресченĕсем çак приказа пурнăçа кĕртме килĕшмеççĕ, вĕсем хăйсен тырă запасĕсене вăрттăн тусем хушшине ăсататççĕ. Югослави хресченĕсем партизансен отрячĕсене каяççĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: ĕнер кăнтăрла Англин пĕчченшерĕн вĕçсе кайнă бомбардировщикĕсем Ганноверпа Вильгельмсхафен çывăхĕнчи объектсене тапăннă. Унсăр пуçне, Англин пĕччен самолечĕсем Бременваррине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМ ГОЛЛАНДИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак юлашки эрнере кăнтăрла Голландие тапăннă «Мистанг» йышши самолетсем 19 локомотива, 7 буксирнăй парохода тата нумай баржăсемпе грузовиксене çĕмĕрнĕ е сиенленĕ. Çав операцисен тĕллевĕ—Голландири çыхăну линийĕсене пăсасси пулнă.

МАДАГАСКАРТИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Хĕвелтухăç Африкăри войскисен командующийĕ пĕлтерў пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: октябрĕн 19-мĕшĕнче Англи войскисем Амбоситран кăнтăралла Фианарантор патнелле куçнă, Ивато районĕнчи позицисене йышăнса тăнă Виши войскисен флангне пырса тухса, вĕсене çĕнтернĕ.

Амбоситр районĕнчи операцисенче 800 çынна тыткăна илнĕ, 2 оруди тата йывăр пулеметсем нумай тытса илнĕ. Англи войскисем халĕ Амбоситртан чылай кăнтăраарахра тăраççĕ.

Ответлă редакторăн
заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ: курьер-уборщица, конюх-возчик и заведующий складом. Имеется столовая и хлебный ларек.
Обращаться по адресу: ул. Кадыкова, 7. Казанская м/о база „Главснабторг".

ГОСУЧРЕЖДЕНИЮ ТРЕБУЮТСЯ кровельщики и ученики-слесаря. Общежитием и питанием обеспечиваются.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5 (Дом печати), ком. 6 (2-й этаж).

НАРКОММЕСТПРОМУ ТРЕБУЮТСЯ: бухгалтер-ревизор, бухгалтер наркомата, экономист-финансист, специалист по металлообработке и машинистка.
Обращаться по адресу: ул. К. Маркса, дом № 3, третий этаж, комн. № 20.

ПРОПАЛА КОБЫЛА черной масти, рождения 1940 года, на лбу звездочка. Пропала в Чебоксарах 8 октября с/г. Знающих местонахождение ее просим сообщить по адресу: д. Асакассы, Чебоксарского района, колхоз им. Чкалова.

ТЕХНО-ТКАЦКОЙ ФАБРИКЕ ТРЕБУЮТСЯ: начальник строительства, прораб, десятник, снабженцы, зав. складом, бухгалтер. Оплата по соглашению.
Обращаться: пос. Волгостроя, помещение Черепичного завода. Тел. № 7—46.
ДИРЕКЦИЯ.

ЧУВАШСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ „РОССНАБСБЫТ" доводит до сведения организаций, что с 30 октября по 6 ноября будет проводиться инвентаризация всех складов и потому отпуск товаров производиться не будет.
РОССНАБСБЫТ.

ТОРГПЛОДОВОЩТРЕСТУ требуются два сторожа. Обеспечиваются буфетом.
Обращаться: г. Чебоксары, ул. Свердлова, 35.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ЛЕСОХИМАРТЕЛИ требуется старший бухгалтер. Оклад 450 руб.
Квартирой, отоплением и освещением обеспечиваются.
Обращаться: Левый берег Волги, Сосновский поселок.
ЛЕСОХИМАРТЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 263 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.